**«Салтак çырнă виç кĕteслĕ çырусем»**

4 - 8-мĕш классенче вĕренекенсем валли çырнă класс тулашĕнчи мероприяти)

*Фомина Вера Артемьевна –*
*Шупашкар хулин 29-мĕш шкулĕн*
*чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ*

**Тĕллев:** ачасен патриотизм туйăмне аталантарасси, Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси. **Задачăсем:** ачасене Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи тата Çĕнтерӳ кунĕ çинчен çĕнĕ пĕлӳ парасси, тăван халăх тунă паттăрла ĕçсемшĕн мăнаçлăх туйăмне аталантарасси. Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме кирлине ăнлантарасси; çар çыннисене, вăрçă паттăрĕсене, ветерансене хисеплеме хăнăхтарасси.

***Ертсе пыракан:*** 2025 çула Раççей Президенчĕ В.В. Путин Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Чăваш Республикинче вăл Çĕнтерӳпе патриотлăх паллипе иртет. Ку ахальтен мар. Рейстаг çине Çĕнтерӳ ялавĕ çакнăранпа май уйăхĕн 9-мĕшĕнче 80 çул çитет. Пысăк çухатупа килчĕ çав кун. Майăн 9-мĕшĕ пирĕншĕн яланах Аслă Çĕнтерӳ кунĕ пулса юлчĕ.

***1-мĕш вĕренекен:***

Çĕнтерӳ пĕр аслă юрă,
Пĕр уяв пек пуличчен.
Тар та юхрĕ, юн та юхрĕ,
Пуçĕпе пĕтни миçен!.. *(Петĕр Хусанкай, «Салтак сăмахĕ»)*

***2-мĕш вĕренекен:***

Мирлĕ куншăн, ун лăпкă çутишĕн,
Пурнăçа вилĕмрен хăтарнишĕн,
Çĕр-шывра пур енчен те йăлтах.
Тăхлан вучĕ сӳннишĕн
Тав сана, Çĕнтерӳçĕ салтак*! (Георгий Орлов, «Çĕнтерӳçĕ салтака»)*

***Ертсе пыракан:*** Фашизма хирĕç Совет Союзĕнчи пур наци çыннисем те пĕр çын пек пулса кĕрешĕве çĕкленнĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче 208 пин чăваш çапăçнă. Вĕсенчен кашни иккĕмĕшĕ каялла тăван тăрăха таврăнайман. Тăшман пульли шеллемен салтаксене. Миçе çул иртсен те, ĕмĕр иртсен те эпир нихăçан та хамăрăн паттăрсене манас çук. Яланах асра тытăпăр пире телейлĕ те мирлĕ пурнăç парнеленĕ салтаксене. Вăрçă хирĕнчен тăван киле таврăнайманнисене, таврăнсан йывăр сурансене пула вăхăтсăр çĕре кĕнисене асăнса пĕр минут шăплăх саманчĕ.

***3-мĕш вĕренекен:***

Кавказран – Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан – Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Тăшмана шăтăка чикиччен,
Берлина çĕмĕрсе кĕриччен
Пирĕн çарăн малтан малах каймалла!
*(Аркадий Ĕçхĕл, «Паттăрсен çулĕ»)*

***4- мĕшпе 5- мĕш вĕренекенсем:***

Паттăрсем кăна мар çĕнтерӳшĕн çĕкленнĕ —
Ватти те, вĕтти те шеллемен пурнăçне.
Сухине хăварса,
Лашине тăварса
Ĕнерхи çĕр çынни тухнă вăрçă хирне,
Тăват çул лăпланман çулăмра вăл кĕлленнĕ.
Çапăçу шăплансан — вăхăт пур тăк лармашкăн
Пăшалне тасатма, тумтирне юсама —
Кăранташ хуçăкне
Тытнă вăл аллине —
Аякри телее асăнса йăпанма,
Кил-йышне хăй çинчен пĕлтерсе хут ямашкăн.

Вилĕме çĕнтерсе вăйлăрах вăл юратнă
Çĕршыва, мăшăрне, ачине, тăвана...
Виç кĕтеслĕ çыру,
Еплерех хыпару?
Кӳршĕпе, ял-йышпа вулаканччĕ сана,
Кĕтекен чĕрере эсĕ шанчăк çуратнă.
Виç кĕтеслĕ çыру... Аслă вăрçă хыпарĕ.
Миçе çул, миçе кун унтанпа иртрĕ пуль!
Кивĕ хут, сарă хут...
Йĕркинче — тамăк, вут...
Çавăнпах-тăр куçа йӳçĕ-йӳçĕ куççуль
Çырăва вуласа пынă май хупăрларĕ...

*(Антонина Саушкина, «Виç кĕтеслĕ çыру»)*

***Ертсе пыракан:*** Вăрçă çулĕсенче мĕн тери йывăр, хăрушă пулнă: пур çĕрте те вăрçă кĕрленĕ, çĕр чĕтреннĕ, çуннă… Кашни çыннăн чун-чĕрине ыраттарса амантнă. Миçе хĕр арăмпа ачана тăлăха хăварман-ши çак вăрçă? Уйрăмах салтак амăшĕн чĕри кунсерен канăçсăр тапнă, ачишĕн пăшăрханнă.

***Виçĕ сăвă вулакан.***

Виçесĕр пысăк пек каçалăк:
Выран-выратăн — катăлмасть.
Сайралчĕ, салхуланчĕ халăх.
Вăрçи çаплах-ха чарăнмасть.
Вăл кунталлах васкать. Хăрушă.
Кашни килех кĕрет инкек.
Чун вăйĕ пĕтнипе пĕр хушă
Аран çеç калаçать инке:
«Çалла... аслийĕ ман пуç хучĕ.
Таçта, инçе вăл... ют çĕрте.
Халь кĕçĕннин те çуккă хучĕ,
Те хăй çырма ерçмест пĕртте.
Кĕтетĕп ир те, каç та — уссăр,
Ăшра упратăп шанчăка...
Епле-ха пурăнăп эп унсăр,
Кам усрĕ вăйсăр карчăка?»
Çыхать те кĕлтине вăл хурлăн
Пăхать уй урлă ялалла.
Тӳпе хуралнă. Кунĕ сулхăн.
Куратăп: пирĕн паталла
Хĕр-почтальон килет. Выраççĕ
Çынсем, ăна сăна-сăнах.
Пĕлетĕп эп: кашни ырра çех
Кĕтет, чĕнет сăмахсăрах.
Кĕç илтĕнет:
— Ача ман сывă!..
Канма вăл тухнă халь... тылра.
Тепри йĕрет:
— Аманнă ывăл.
Хутне те çырнă-çке сестра...
Инке те ак çыру илет те,
Именнĕн ман ума çитет.
— Ачам лармастăн та эс кĕлт те...
Куç витĕр мар... Вулан-ши? — тет.
Уçатăп конверта... Сасартăк
Куç сӳнчĕ пек — курмасть нимскер.
Вулас килмест тек... Хăть çурса тăк.
Ытла усал хут вăл... Тискер.
Ку хыпара мĕнле-ха калăн?..
Хĕсет, пĕрет вăл чĕрене.
Сăмах тупма та çуккă халăм,
Ним чĕнейместĕп инкене.
Вăл манăн асапа курать те
Хăйне мĕн кĕтнине сисет...
Пĕр хускалми тăрать, тăрать те
Касса пăрахнă пек ӳкет...
*(Георгий Орлов, Виçесĕр пысăк пек каçалăк...)*

***Сценка* фронтри каннă самант**: пĕри çыру çырать, тепри хаçат, çыру вулать, медсестра салтака сиплет, шкул ачи «Çĕрпӳртре»/«В землянке» (сăвви А.Сурковăн, кĕвви М. Блантерăн) кĕвĕ калать.

***Ертсе пыракан:*** Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хирĕнчен çырнă виç кĕтеслĕ çырусем … Вĕсем килтисене савăнтарнă та, çав хушăрах хурлантарнă та. Çак çырусене салтакăн кил-йышĕ хаклă тупра е чаплă реликвии вырăнне хурса упранă, халĕ те упраççĕ. Темиçе хут та тытса вуланă, нумайăшĕ шанчăкне фронтран килнĕ çырусемпе çыхăнтарнă. Вĕсем вăй-хал парса тăнă. Сарăхнă çырусене ачисене, каярахпа мăнукĕсене кăтартса вулаттарнă. Çапла майпа салтаксен вăрçăри кун-çулĕ, вĕри туйăмĕсем, Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесе юн тумламĕсем юлмиччен çапăçнине пĕлетпĕр.

***Юрă «Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем»,*** сăвви Ю. Плотниковăн, кĕвви А. Сергеевăн.

Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем...
Вăрăм пулчĕç, йывăр пулчĕç çулĕсем.
Киле çитнĕ инçетрен,
Юнлă вăрçă хирĕнчен
Салтăк çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем —
Иртнĕ вăрçăн ĕмĕрхи хыпарçисем.
Савăнтарнă та пире,
Хурлантарнă та пире
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем.
— Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем, —
Çырăвне çапла пуçлатчĕç аттесем. —
Аркатсассăн тăшмана
Кĕтсе илĕр ак мана,
Хаклă мăшăр, ман юратнă ачасем.
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем...
Паян кун та упранаççĕ-ха вĕсем.
Çулăм витĕр тухнисем,
Куççульпе йĕпеннисем,
Салтак çырнă виç кĕтеслĕ çырусем...

***Ертсе пыракан:*** Юнлă вăрçă хирĕнчен килнĕ виç кĕтеслĕ çырусем паянхи кун литература палăкĕ пек шутланаççĕ, вĕсене салтак кил-йышĕнче ăруран - ăрăва парса пыраççĕ. Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ. Аслă Çĕр-шывăмăр фашизма хирĕç çĕкленсен, пирĕн ентешсем те хăйсен çĕрĕшĕн кар тăнă. Тăван Çĕр-шыва хӳтĕлесе вĕсем чи хаклă пуянлăха – пурнăçне панă